# ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. ДАНИЛОВ ыйтусем ҫине хуравлать

(Вĕҫĕ. Пуҫл. 1-мĕш стр.).

**Ыйту: – Муркашри мунча малтан 13 сехетрен ĕҫленĕ, халĕ 15 сехетрен ĕҫлет. Ҫакна ҫынсене тархăтарма тунă-и?**

**Хурав:** – Муркашри мунчан ĕҫ режимне улăштарни пирки ҫавна каласа хăвармалла. Проектпа килĕшӳллĕн мунчара 1 сехетре 50 ҫын таран ҫăвăнма пултарать. Анчах та мунчана ҫӳрекенсем чылай сахалрах, кунне 100 ҫынран ытла мар. Ку вăл мунча 2-3 сехет ĕҫлемелĕх. Хальхи вăхăтра вара мунча 15 сехетрен пуҫласа 20 сехетчен е 5 сехет хушши ĕҫлет. Сехетре кунта 50 ҫын ҫăвăнма пултарать пулсан, 100 ҫынна тата ытларах та ҫăвăнма ку ҫителĕклĕ.

Ĕҫ режимне улăштарни тепĕр проблемăпа та ҫыхăннă. Ку вăл – мунчана тытса тăма каякан тăкаксене чакарасси. 2005 ҫулта Муркашри коммуналлă хуҫалăх предприятийĕ мунчана 1 сехет ĕҫлеттерме 1552 тенкĕ тăкакланă. Ҫулталăк итогĕсемпе вара мунчана ĕҫлеттерсе пĕтĕмпе 192 пин тенкĕ тăкак тӳснĕ. Ҫапла вара ĕҫ режимне 3 сехет чухлĕ кĕскетме йышăннă. Ку вăл ҫулталăкра вăтамран 224 пин тенкĕ перекетлеме май парать.

**Ыйту: – Муркашри мунчана юсав ĕҫĕсем пурнăҫлама тесе 2 уйăха хупрĕҫ. Анчах нимĕн те туман-ҫке. «В аварийном состоянии» тесе мунчана хупмĕҫ-и?**

**Хурав:** – Ҫулла мунчана котельнăя юсаса реконструкци тума хупнă. Ҫакă ĕҫ хăй хаклăхне чакарма май парĕ. Мунчара авариллĕ лару-тăру мар, ăна хупасси пирки сăмах пымасть. Ҫапах та ҫитес ҫул ҫулла юсав ĕҫĕсем туса ирттерме палăртнă.

**Ыйту: – Пирĕн ЖКХ ĕҫченĕсем Муркашри хваттерсенче шыв ҫуккине ҫак сăлтавсемпе ăнлантараҫҫĕ:**

**1.Ҫумăр ҫуманни.**

**2.Ял ҫыннисем пахча шăварни.**

**3.Муркашра мунча хутни.**

**Хăвăрах куратăр, шута илме тивĕҫлĕ хисеплĕ сăлтавсем.**

**Паян ҫумăрĕ те ҫукалать, пахчасем те шăвармаҫҫĕ, мунчине те йĕркеллĕ хутмаҫҫĕ – анчах хваттерсенче ирпе каҫ шыв ҫук.**

**Эсир те ку ыйтăва татса пама пултараймастăр пулĕ?**

**Гагарин урамĕнчи 20-мĕш ҫуртра пурăнакансем.**

**Хурав:** – Муркаш ялĕнчи Гагарин урамĕнче шыв парса тăмалли сете 20 миллиметрлă пăрăхсемпе хурса хăварнă. Шыв пусăмне ӳстерес тесен 20 миллиметрлă пăрăхсене 75 миллиметрлисемпе улăштармалла. Ҫак кунсенче Гагарин урамĕнчи 20-мĕш ҫуртра пурăнакансене шывпа тивĕҫтерессине лайăхлатас тĕллевпе шывпа тивĕҫтермелли системăри шыв пусăмне ӳстерме хушнă.

**Ыйту: – Пирĕн Шетмĕпуҫ тăрăхĕнчи ялсенче шыв ыйтăвĕ ҫивĕч. Эсир пулăшма пултаратăр-и?**

**Хурав:** – 131 № Федераллă Саккунпа килĕшӳллĕн ял тăрăхĕн территорийĕнче ҫынсене электричествăпа, ăшăпа, газпа, шывпа, топливăпа тивĕҫтерессе ял тăрăхĕн вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтăвĕ шутланать. Ку ыйтупа ял тăрăхĕн администрацийĕпе тачăрах ҫыхăнса ĕҫлĕпĕр. Ял тăрăхĕн территорийĕнчи пĕр шыв башни пирки ыйтăва, тĕпрен илсен, татса панă темелле.

**Ыйту: – Муркаш ялĕнчи нумай урамра асфальт ҫул ҫук. Тĕлĕнмелле, пирĕн Чапаев урамĕнче асфальт ҫул пулĕ-ши?**

**Хурав:** – Чăваш Республикин Президенчĕ 2006 ҫулхи августăн 21-мĕшĕнче йышăннă «ЧР автомобиль ҫулĕсен сетьне хăвăртрах туса пĕтерессипе пурнăҫламалли мерăсем ҫинчен» Указĕпе килĕшӳллĕн ялсемпе урамсенче ҫул тăвас пулсан пректпа смета документацийĕ кирлĕ. Кунпа пĕрлех ку урамра пурăнакан ҫынсен уйрăм хуҫалăхĕсем умĕнче йĕрке пуррипе ҫукки ҫине пысăк тимлĕх уйăраҫҫĕ.

Чапаев урамĕпе илес пулсан, проектпа смета документацине туса хатĕрленĕ. Урамсенчи йĕркелĕхе тĕрĕслеме комисси туса хураҫҫĕ.

**Ыйту: – Шаптак Муркаш урамĕсенче ҫĕрле тĕттĕм. Урамри юпасем ҫине лампочкăсем мĕншĕн вырнаҫтармаҫҫĕ? Муркашра та центрта кăна ҫап-ҫутă.**

**Хурав:** – Хальхи вăхăтра Муркаш ялĕн тĕп урамĕнче тата нумай хваттерлĕ ҫуртсем умĕнче ҫĕрлехи вăхăтра юпасем ҫинче электричество лампочкисем ҫунаҫҫĕ. Вĕсене электролинин пиллĕкмĕш проводи урлă фотоэлемент ҫутса сӳнтерет. Ҫуллахи вăхăтра ку урамсенче те ҫутă пулман. Ҫакă бюджетри укҫа-тенкĕне перекетлессипе ҫыхăннă. Хальхи вăхăтра пур ялта та юпасем ҫинче вырăнти выключательпе усă курса ҫутă ҫутассине йĕркеленĕ. Анчах та пур юпасем ҫине те электролампочкăсем вырнаҫтарса ҫутă ҫутассине йĕркелеме укҫа-тенкĕ ҫитмест. Тепĕр чухне вара ҫутăна вăхăтра сӳнтерменни те тĕл пулать. Ҫавăнпа та электроэнерги сутакан компани С05-00-030 № акт ҫырнă. Ҫапла вара юпасем ҫинчи лампочкăсене 5-мĕш проводапа счетчик урлă кăна ҫутма ирĕк параҫҫĕ. Ҫавăнпа та ҫитес вăхăтра ялсенче ҫутă лампочкисене ҫутма 5-мĕш провода кирлĕ пулать, счетчиксемпе ҫутă сӳнтермелли фотоэлементсем кирлĕ пулаҫҫĕ. Ҫак ĕҫсене тума каякан тăкаксене бюджетран саплаштарас ыйтăва депутатсемпе пĕрле пăхса тухма тивет. Хальхи вăхăтра Шаптак Муркаш ялĕнче 10 юпа ҫинче электричество лампочкисем ҫунаҫҫĕ.

**Ыйту: – Муркашран кирпĕч заводне утакан ҫынсене ҫӳреме тротуар туса пачĕҫ. Питĕ лайăх. Ҫынсене хисеплени савăнтарать. Куншăн влаҫрисене тав тăватпăр. Москакассинче те утма ҫул кирлĕ. Ҫакна аслă ҫула тунă чухне пĕрле тума ҫук-и?**

**Хурав:** – 2007 ҫулта Москакассинчен тытăнса Мăрсакасси ялĕ патне ҫити 750 метр ҫул тата Москакассинчен афганецсене асăнса лартнă палăк патне ҫити 844 метр тротуар тума палăртнă. Проектпа смета документацине хатĕрлесе ҫитерне ĕнтĕ, экспертиза пур.

**Ыйту: – Мăн Сĕнтĕрти больницăра лицензи илмесĕрех пиявкăсемпе сиплеҫҫĕ. Укҫалла пулнăран ку процедурăна кашнинех тума тăрăшаҫҫĕ. Капла туни тĕрĕс пулать-и?**

**Хурав:** – Юн сăхтармалли сĕлĕхсемпе (пиявкăсемпе) ĕҫлеме ятарласа вĕреннĕ специалист пур, сертификат илнĕ. Паллах, сĕлĕхсене пур ҫынна та лартмаҫҫĕ. Ку вăл ҫыннăн хăйĕн ирĕкĕнчен тата ятарлă показанисенчен килет. Ҫак процедура чăннипех тӳлевлĕ. Мĕншĕн тесен сĕлĕхсене ятарлă питомникра (Балаково хулинче) ҫитĕнтереҫҫĕ, вĕсене укҫалла туянса килеҫҫĕ. Пĕр сĕлĕхпе пĕр хут кăна усă кураҫҫĕ. Юлашки вăхăтра сĕлĕхсемпе епле усă курнине администраци ҫирĕп тĕрĕслесе тăрать.

**Ыйту: – Пире, садикре ĕҫлекенсене, 6 уйăхра пĕр хутчен медосмотр тăратаҫҫĕ.**

**Ку таранччен пĕчĕк ĕҫ укҫи илекенсене (поварсене, няньăсене) медосмотр тăма тӳлевсĕр талон паратчĕҫ. Пысăкрах ĕҫ укҫи илекенсем (заведующи, воспитательсем) медосмотр тăнăшăн 180 тенкĕ тӳлетчĕҫ.**

**Ку хутĕнче, июльте медосмотр тăнăшăн, пĕчĕк ĕҫ укҫи илекенсене талон памарĕҫ, 180 тенкĕ тӳлеттерчĕҫ. Тĕрĕсех-и ку?**

**Хурав:** – Ҫапла, малтанхи вăхăтра районти вĕрентӳ пайĕ тата шкулсем пĕчĕкрех ĕҫ укҫи илекенсем медосмотр тăнăшăн хăйсем шучĕпе саплаштаратчĕҫ. Финанс йывăрлăхĕсене пула кăҫал хăш-пĕр ҫĕрте ҫакна валли укҫа-тенкĕ тупаймарĕҫ пулас. 2007 ҫул валли вара эпир вĕрентӳ ĕҫченĕсене ҫулталăкне 1 хут тӳлевсĕрех медосмотр тăма майсем шыраса тупма шантаратпăр. Кунта ача сачĕсенче ĕҫлекенсем те кĕреҫҫĕ. Иккĕмĕш хут медосмотр тăрасси вара учрежденири коллективлă договорпа пăхнă пек ĕҫлекен ҫын е районти вĕрентӳ пайĕ шучĕпе пулĕ.

**Ыйту: – Хулара манăн йăмăк пурăнать. Вĕсем май уйăхĕнчен тытăнса сентябрь уйăхĕччен ăшăпа усă курнăшăн, коммуналлă услугăсемшĕн тӳлемеҫҫĕ. Хваттерте пурăннăшăн тӳлесси ҫу кунĕсенче икĕ хут пĕчĕкрех. Муркашра вара ҫулла та, хĕлле те пĕр пекех тӳлеттереҫҫĕ. Ҫавăн пекех пулмалла-и ҫакă?**

**В. СТЕПАНОВА. Муркаш.**

**Хурав:** – Ҫынсене ăшăпа тивĕҫтернĕшĕн халĕ ҫулталăкĕпех уйăхсерен 1 тăваткал метр пусне 0,022 Гкал шучĕпе тӳлеттереҫҫĕ. Кун пирки депутатсен районти Пухăвĕ 1998 ҫулхи майăн 13-мĕшĕнче С-10/1 № «Ҫурт-йĕрте пурăннăшăн тата коммуналлă услугăсемпе усă курнăшăн тӳлессин системине йĕркелесси ҫинчен» йышăну тунă. Хваттерсене хутса ăшăтнăшăн хĕллехи вăхăтра ҫеҫ тӳлес пулсан, чылайăшĕ ăна тӳлесе тăраймĕ.

**Ыйту: – Ĕҫ укҫин чи пĕчĕк виҫи пурăнмалли минимумран пĕчĕк пулмалла мар тесе ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров указ кăларчĕ. Пĕрлешӳллĕ хуҫалăхсенче вара чылай ҫĕрте ĕҫ укҫи шайĕ пурăнмалли минимумран самай пĕчĕкрех. Ку вăл мĕне пĕлтерет? Ҫакна кам тĕрĕслесе тăрĕ?**

**Хурав:** – Ку енĕпе республикăра та, районта та ĕҫсем пыраҫҫĕ. Паллă ĕнтĕ, ĕҫ укҫи шайĕ экономика аталанăвĕпе тӳреммĕнех ҫыхăннă. Хальхи вăхăтра чи пĕчĕк ĕҫ укҫи шайĕ 1100 тенкĕпе танлашать. Ку ыйтупа районта канашлу та ирттернĕ. Районти предприятисемпе организацисен ертӳҫисем умне ку енĕпе йышăннă указа 2007 ҫулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пурнăҫласа пырасси пирки задача лартнă. Ĕҫ укҫи тӳлессипе ҫыхăннă ыйтусене епле таттса панине ĕҫ енĕпе ĕҫлекен инспекци тĕрĕслесе тăрĕ.

**Ыйту: – Хулари коммуналлă хуҫалăхсем картишсене тасатса тирпейлесе тăма дворниксем тытаҫҫĕ. Пирĕн патра ҫав ĕҫсене хваттерсенче пурăнакансем пурнăҫлаҫҫĕ. Ҫав вăхăтрах хваттер укҫине те хулари чухлех тӳлеттереҫҫĕ. Тĕрĕслĕх пур-и кунта?**

**Хурав:** – Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăх предприятийĕсенче тирпей-илем кĕртессипе (ҫӳп-ҫап тăкмалли ещĕксем тавра тасатассипе) штатра 1,5 тата 1,2 ҫын шутланса тăрать. Ҫурт-йĕре (нумай хваттерлĕ ҫуртсенчи пĕрлехи пурлăха) тытса тăнăшăн тата юсанăшăн тӳлемелли тарифсене ҫирĕплетнĕ чух подъездсене тасатса тăма ятарлă ҫынсем тытма каякан тăкаксене пăхса хăварман. Ятарлă ҫынсем тытсан хваттер укҫи татах ытларах тӳлемелле пулĕччĕ. Районти ҫынсем 2-3 хутлă нумай хваттерлĕ мар ҫуртсенче пурăнаҫҫĕ, ҫуртсен ҫийĕсемпе коммуникацисене юсасах тăмалла. Хулара вара ҫуртсем 5-9 е ытларах та хутлă, нумай хваттерлĕ. Паллă ĕнтĕ, юсав ĕҫĕсем тăма каякан тăкаксене кашни хваттер ҫине пайласан, ку сумма пирĕн патра хуларинчен самай пысăкрах. Ҫав сăлтавпах хваттер укҫин виҫине пĕчĕклетме май ҫук.

**Ыйту: – Катькасра ача садĕнче сестра ҫук. Педиатр та ҫук. Врач амбулаторийĕнче стационарлă сиплев ĕҫне пăрахăҫланă. Ку енĕпе уҫăмлăх пулать-ши?**

**О. ТЯМИНА.**

**Хурав:** – Ҫапла, Катькасри ача садĕнче хальхи вăхăтра медицина сестри ҫук. Ҫакă специалист пулманнипе ҫыхăннă. Районти вĕрентӳ пайĕ ку енĕпе ҫине тăрса ĕҫлет. Хальхи вăхăтра ку енĕпе ача садне Катькасри врач амбулаторийĕ кирлĕ медицина пулăшăвĕ парса тăрать. Ялти врач амбулаторийĕн врачĕ пĕтĕмĕшле практика врачне вĕренсе тухнă. Ҫавăнпа та вăл халĕ терапевт ĕҫĕсене кăна мар, ача-пăча тухтăрĕн, лор, гинеколог, окулист тивĕҫĕсене те пурнăҫлама пултарать. Амбулаторире юсав ĕҫĕсем туса ирттерме палăртнă. Хыҫҫăн кăнтăрлахи станционар пирки те ыйтăва татса пама май килĕ.

**Ыйту: – Эпĕ, Иванов Илья Христофорович, Тушкасси ялĕнче пурăнатăп, иккĕмĕш ушкăн инваличĕ. Чĕрепе аптăратăп. Эмелсене яланах укҫалла илетĕп. Льготнăй списокпа пăхнă эмелсем пĕрре те килмеҫҫĕ. Е больница заявкăсене вăхăтра тăратмасть, е сăлтавĕ урăх? Хăҫан йĕрке пулать ку ĕҫре? Соцпакет халĕ тытăнса юлать, эмелĕ ҫук. Пулăшăвĕ хитре сăмахсенче кăна-ши?**

**Хурав:** – Чăнах та эсир чĕре чирĕпе диспансерлă учетра тăратăр. Эмелсене йăлтах укҫалла илетĕп тени тĕрĕсех мар. 2006 ҫулта эсир 1773 тенкĕлĕх тĕрлĕ эмелсем илнĕ. Кăҫал эсир стационарта тата санаторире сипленнĕ. Унта сире, паллах, тӳлевсĕрех сипленĕ. Тепĕр чухне пур эмел аптекăра пулманни те пулкалать. Анчах та эсир яланах заявка парса хăварма пултаратăр.Мĕнле эмел кирлине сире сиплекен тухтăр лайăх пĕлет. Эмелĕсене тухтăрсем хăйсем пĕлнĕ тăрăх, кирлине пăхса ҫырса параҫҫĕ.

**Ыйту: – Мăн Токшик ялĕнчен Муркаша ҫӳреме питĕ кансĕр. Ку маршрутпа ирпе тата каҫхине те пулин автобус маршручĕ уҫма май ҫук-ши.**

**Мăн Токшик ялĕнче пурăнакансем.**

**Хурав:** – Ку ыйтăва татса патăмăр теме пулать. Ҫак кунсенчех И.Никитин уйрăм предпринимателĕн автобусĕсем ирпе, кăнтăрла тата каҫхине Мăн Токшик ялне ҫӳреме пуҫлаҫҫĕ. Автобуссем Муркашран Мăн Токшик ялне 6 сехет те 30 минутра, 12 сехет те 30 минутра, 17 сехет те 25 минутра, Мăн Токшик ялĕнчен Муркаша вара 7 сехетре, 12 сехет те 55 минутра, 17 сехет те 50 минутра ҫула тухаҫҫĕ.

**Ыйту: – Муркашра ҫĕр хĕсĕк. Больница территорийĕнче вара пушă вырăн нумай. Кунта мĕн тăваҫҫĕ-ши?**

**Хурав:** – Ĕлĕк больница ҫурчĕ пулнă вырăнта паянхи кун улма-ҫырла сачĕ ешерет. Кунсăр пуҫне эпир малашлăха пăхса пурăнма тăрăшатпăр. Кăҫал е ҫитес ҫулах май килмесен те, малашлăхра ҫак вырăнта ҫĕнĕ, йĕркеллĕ поликлиника туса лартма шухăшсем пур. Хальхи вăхăтра йĕркелӳ, планлас ĕҫсем пыраҫҫĕ.

**Ыйту: – Манăн хĕр ача йывăр чирлет. Пĕрре кăна мар больницăра выртнă. Халĕ ура ҫине тăчĕ ĕнтĕ. Нумаях пулмасть хăйне япăх туйнипе больницăна кайрĕ. Анчах унта: «Стационарта вырăн ҫук»,– тенĕ. Камран пулăшу ыйтмалла?**

Чирлĕ ҫынна тата амăшне хăйсене хурав панă.

**Ыйту: – Эсир, депутат пулнă май, ҫак йĕркесĕрлĕх пирки мĕн шутлатăр тата ăна пĕтерме пулать-и: хальхи вăхăтра телеэкран ҫинче кăтартакан кинофильмсенче кăнтăрла та, каҫхине те секс, вĕлерни, тискерлĕх сахал мар. Мĕн курса ӳсеҫҫĕ ачасем пĕчĕкренех? Ашшĕ-амăшĕ ĕҫре чух вĕсене никам та контроллесе тăмасть вĕт-ха?**

**Хурав:** – Юлашки ҫулсенче телеэкрансем ҫинче йĕркесĕрлĕхсем сахал мар. Секс та, тискерлĕх те, пĕр вĕҫĕм рекламăсем те ытлашшипех. Шĕкĕр турра, Патшалăх Думин депутачĕсем тăрăшнипе телеэкран ҫинче водка, сăра рекламисене чарма май килчĕ (22 сехетчен). Эмелсен рекламине те чармалла тесе шутлатăп. Мĕншĕн тесен тĕнчери ытларах ҫĕршывсенче ҫапла тăваҫҫĕ те. Ку вăл сывлăхшăн хăрушлăх кăларса тăратма пултарать.

Секс, вĕлерни, пусмăрлани пирки те передачăсене чакармалла. Телеканалсен ĕҫченĕсем иртĕхсех кайрĕҫ. Хăйне май «цензура» кирлех. Ку вăл демократи принципĕсемпе килĕшсе тăмасть теҫҫĕ, паллах. Анчах та дисциплинăсăр демократи те демократи мар. Демократи вăл мĕн тăвас килнине пĕтĕмпех тума юрать тенине пĕлтермест. Эпир, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем, ку ыйтусем тĕлĕшпе малашне те ҫине тăрса ĕҫлĕпĕр.

**Ыйту: – Районти тĕп больницăри чирлисемпе кăнттам калаҫакан медицина ĕҫченĕсем пирки мĕн калама пултаратăр?**

**Хурав:** – Эпĕ районти тĕп больницăн тĕп врачĕнче ĕҫлеме пуҫласан пĕрремĕш кунран тытăнсах тухтăрсем, медицина сестрисем, санитаркăсем умне больницăна пыракансемпе, чирлисемпе тимлĕ те вашават пулмалли пирки задача лартрăм. Мĕн-мĕн те, ҫакна валли бюджетран хушма укҫа кирлĕ мар, анчах та чирлисен сываласлăхĕ ăшă кăмăлтан та чылай килет. Пирĕн, сывлăх сыхлавĕн ĕҫченĕсен, хамăр ҫак ĕҫе суйласа илнĕ пулсан, таравтлăх пирки манмалла мар. Мĕн тăвăн, чăнах, хăш чухне пациентсем, уйрăмах ӳсĕррисем кăмăла хуҫни те пулать. Ҫавна палăртса хăварасшăн, йышăннă мерăсене пула медицина ĕҫченĕсем енчен кăнттамлăх тата тӳрккеслĕх паллисем палăрмаллах чакрĕҫ. Кун пек фактсем пулаҫҫĕ пулсан вара ун пирки мана хама е манăн ҫумсене профилактика ĕҫĕсем туса ирттерме пĕлтерме ыйтатăп.

**Ыйту: – Муркашра ачасене шывра ишме вĕрентмелли вырăн ниҫта та ҫук. Халĕ тăвакан физкультурăпа сиплев центрĕнче ишме вĕрентмелли бассейн пулать-и?**

**Хурав:** – Ку ыйтăва татса парассипе эпир район администрацийĕпе пĕрле чăнах та пысăк ĕҫ туса ирттертĕмĕр. Лару-тăру уҫăмланать. Эпир шутланă пекех пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулсан, 2007 ҫулах малтан тума тытăннă Культура ҫурчĕ вырăнĕнче физкультурăпа спорт комплексне хута яма май килĕ. Паллă ĕнтĕ, унта бассейн та пулĕ.

**Ыйту: – Владислав Григорьевич, эсир суйлав умĕн Исетерккĕри пĕр тăван Алексеевсен урамĕнче ҫул пуласси пирки шантарнăччĕ. «Ҫул-йĕр» программа ĕҫленĕ май ял халăхĕн шанчăкне тӳрре кăларма пултаратăр-и е суйлавçăсен депутатсемшĕн сасăсене панипех ҫырлахмалла? Ял варринчи тарăн ҫырма, Исетерккĕ ялĕ пекех, чапа тухма пултарчĕ: икĕ хут Чăваш телевиденийĕ ҫине ҫитрĕ, РФ Патшалăх Думин депутачĕ П. Семенов патне алă тăсса пăхрăмăр т. ыт. те.**

**Эсир, ял халăхĕ шаннă депутат, ҫак ҫул пирки тăрăшма тивĕҫлĕ тесе шутлатпăр. Хăвăр сăмаха ĕҫпе ҫирĕплетессе шанатпăр, кĕтетпĕр.**

**Хурав:** – Хурава ҫак сăмахсенчен пуҫлас тетĕп. Суйлавçăсем депутатсемшĕн сасă панипех ҫырлахмастпăр. Эпир шантарса каларăмăр пулсан, ҫав ыйтăва пурнăҫлама тăрăшатпăрах. Чăнах та, Исетерккĕ ялĕ ытти ялсенчен чылай енпе уйрăлса тăрать. Кунта историе кĕрсе юлнă хĕрарăм Т.Н. Николаева пурăннă, Тăван ҫĕршыва хӳтĕлеме 8 ывăл вăрçă хирне ăсатнă. Ҫак ялтах Олимп вăййисен чемпионки Валентина Егорова та ҫуралса ӳснĕ. Ку урама ҫул тума проект хатĕрлеме панă. Ҫитес ҫул ҫулне тума тытăнмалла. Тарăн ҫырмана хупласси те – ҫак ҫулпа пĕрле тумалли ĕҫ.